«Халăх пуçарулăхĕ»

# Пĕрле пулсан ĕçсем кал-кал пыраççĕ

Юлашки çулсенче республика ертӳлĕхĕ ял пурнăçĕ çине пысăк тимлĕх уйăрма пуçланине куратпăр. Чăваш Енри ял-саласене тĕрлĕ программа шайĕнче 5 миллиард тенке яхăн аталантарас тĕллевсем пур. Ку ырă утăма паян ялсенче пурăнакансем лайăх кăмăлпа йышăнаççĕ. Асăннă укçа-тенкĕн тĕп пайĕ ялсенчи социаллă, инженери тата транспорт инфраструктурине çĕнетме каймалла. Çӳлтен аннă укçа-тенкĕпе усă курассинче вырăнсенче ял çыннисем пуçарулăх бюджечĕ йĕркелени ĕç хăвăртлăхĕшĕн çирĕп тĕкĕ пулса тăрать.

**Ярапайкасси ял тăрăхĕнче пуçарулăх бюджечĕпе пĕрремĕш çул мар тухăçлă ĕçлесе пыраççĕ. Ялти пуçаруллă çынсем, вырăнти депутатсем ялта пурăнакансемпе пĕр йыша пухăнса ĕçленипе иртнĕ çулсенче ку тăрăхра сахал мар ĕç туса ирттернĕ. Ума лартнă тĕллевсем епле пурнăçланса пыни пирки Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Олимпиада Веселова çапла каласа пачĕ:**

– Харпăр хăй кил-çуртĕнчи тирпейлĕх унта пурăнакансем хăйсене епле тытнинчен килет. Пуçарулăх бюджечĕпе туллин ĕçлессине эпир хамăр ял тăрăхĕнче вăхăтра çул патăмăр. Ял тăрăхĕн администрацийĕн депутачĕсемпе вырăнта пурăнакан пуçаруллă çынсем тăрăшнипе çак çăмăл мар лава вырăнтан вăхăтра хускатрăмăр. Унччен Тури Тăмлайра, Кӳстерекре, Шурчара тунă çулсен тĕслĕхĕпе пĕлтĕр вак чул сарнă çулсене Çĕн Тăмлайра (200 метр), Анатри Тăмлайра (860 метр) турăмăр. Унччен пылчăкпа çăрăннă çулсем куç умĕнчех хупланчĕç.

Пĕрне кура тепри тенĕ пек, кăçал пуçарулăх бюджечĕн эстафетине милютакассисемпе шурчасем алла илчĕç. Пĕрремĕшсем хăйсен ялĕнче вак чул сарса çул хытарассине хăвăртлатма хăйсен укçи-тенкине çителĕклĕ явăçтарчĕç.

Çапла вара 1557101 тенкĕ тăракан çул тăвассине хăвăртлатма ялта пурăнакансен пуçарулăх ушкăнĕ милютакассисемпе тĕплĕ ăнлантару ĕçĕ ирттерсе 165 пин тенкĕ ытла укçа пуçтарчĕç.

Халăх вырăнтан тапранни харама каймарĕ. Подрядчик «Стройтранс» СК ООО строительство ĕçĕсене кĕске вăхăтра пурнăçларĕ, урам хушшинче ку таранччен çăрăлнă пылчăка ĕнерхи куна хăварчĕ. Ял çыннисем ку çул пирки паян ăшă сăмахпа çеç калаçнине илтме пулать.



Пуçарулăх ушкăнĕсем паян кашни ялтах ĕçлеççĕ. Вĕсем тăрăшнипе халĕ чылай вăхăт алă çитмен объектсенче те юсав ĕçĕсем вăй илеççĕ. Паян, тĕслĕхрен, Çĕньял Шурчари 140 метра яхăн çула юсассине Е. Капитонов индивидуаллă предприниматель вĕçлесе пырать. Çул хакĕ 470 пин тенкĕ пулсан, 10 процентне пĕр шухăшлă пулса халăх хăй çине илнĕ те ĕнтĕ.

Пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе ĕçлесе ытларах ĕç те тума пулать. Кăçал авă халăх тăрăшнипе Çĕньял Шурчара çăл тума май килчĕ пулсан, çывăх вăхăтра çак мелпе усă курса шыв башнисем юсас кăмăл та пур.

# Хамăр пурнăçа хамăрăнах лайăхлатмалла



**Турай ял тăрăхĕ 11 яла пĕрлештерсе тăрать. Унта пурăнакансем ĕçченлĕхпе, йывăрлăхсем умĕнче пуç усманнипе, çĕнĕлĕхсене алла илессипе, ăна валли пуçаруллă çынсем пуррипе, вĕсем паянхи ĕçе ырана хăварма хăнăхманнипе палăрса тăраççĕ.**

Çапла вара вырăнсенче пуçарулăх бюджечĕпе анлă усă курма пуçласан, вĕсем тăван еншĕн меллĕ аталану çулĕ уçăлнинчен катара юлмарĕç. Малтанах ялти активистсем тăрăшнипе пуçарулăх бюджечĕ йĕркелесе Мăн Токшикри Березовая урама вак чул сарса 170 метр тăршшĕ çул турĕç. Токшиксем пĕрле ĕçленин усси ыттисемшĕн те ырă тĕслĕх пулчĕ.

Кун хыççăн Анаткассинчи активист Анатолий Пастухов тăрăшнипе пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе туллин усă курса Овражная урамра 460 метр чухлĕ çул юсама май килчĕ.

Ырри ырăпа аталанса пырать. Ĕçлекене патшалăх енчен çирĕп пулăшу пулни ыттисене те ыйхăран вăратрĕ. Çапла вара пуçарулăх бюджечĕпе ĕçлесси ял тăрăхĕпех сарăлчĕ: унăн хумĕ кашни яла тата урама çитрĕ.

Иртнĕ çулах асăннă ялти Восточная тата Октябрьская урамсенче пурăнакансем пĕр шухăшлă пулчĕç. Вăл вăхăтра ял тăрăхĕн депутачĕ пулнă Геннадий Викторов ертсе пынипе 420 метр тăршшĕ урама кĕске вăхăтрах вак чул сарса хытарма пултарчĕç. Анаткассисемпе пĕрлех Çулав ялĕнче пурăнакансем те кун уттинчен юлмарĕç. Кунта пурăнакансем харпăр хăй укçине хывса, патшалăх пулăшăвĕпе туллин усă курса, Колхозная урамра 780 метр тăршшĕ çул юсарĕç, ял илемĕн палли туса хăварчĕç.

Ырă ĕçĕн вĕçĕ пулмалла мар теççĕ. Çапла вара кăçал та Анаткассинчи Березовая урамра ял депутачĕ Олег Григорьев тимленипе 680 метр тăршшĕ çула юсаса хăт кĕртме май килнĕ. Кăçалччен урам тăрăх юхнă шыв кунта пурăнакансене питĕ пăшăрхантарнă. Халĕ вара, çул тунă май, строительсем йĕркеллĕ шыв юххине те пăхса хăварнă.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Евгений Орлов маларах пурнăçланă ĕçсем кăçал та малалла пурнăçланса пынине пытармарĕ. Çапла вара пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе усă курса кăçал Анаткассинчи Березовая урамра «Стройка-21» ООО пурне те килĕшмелле çул сарса панă. Уйри шыв урама юхнăран ку таранччен ялпа иртме те май пулман. Паян вăл анаткассисемшĕн историе юлнă пулăм ĕнтĕ.

Хамăр калаçура Евгений Витальевич пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе пурнăçламалли ĕçсем ял тăрăхĕнче татах пуррине пĕлтерчĕ. «Вĕсене те ял çыннисем пĕр çын пек хутшăнасса шанатăп. Хамăр пурнăçа хамăрăнах йĕркене кĕртмелле. Ку ыйтура пире аякран килсе пулăшакансем пулас çук», – терĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ туман ĕçсем пирки калаçма иртерех пулнине палăртса.

Пирĕн пата çыраççĕ

# Археологи – кăсăклă наука

Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультечĕн студенчĕ пулнă вăхăтра археологи дисциплинипе Борис Каховский преподаватель экзамен тыттарнăччĕ. Сăмах май, тепĕр экзамена вăтам Атăл çи тăрăхне тишкернĕ питĕ сумлă ăсчах Василий Каховский, чăваш гуманитари наукин мăнаçлăхĕ, хăй йышăннăччĕ. Иртнĕ ĕмĕрти 50-мĕш çулсен варринчен пуçласа археологи тĕпчевĕсем унăн пурнăç ĕçĕ пулса тăнă...

Борис Каховскийпе Çĕрпӳел (Çĕрпӳ районĕ) археологи тĕпчевĕнче пĕр ушкăнра пулма та тӳр килнĕччĕ. Çавăн чухне вăл археологи – тĕпчекен, япаласем пулăшнипе иртнине куç умне кăларакан наука тесе каланине халĕ те лайăх астăватăп.

Чылай вăхăт хушши ĕнтĕ чăваш археологĕсем (В. Каховский, Б. Каховский, А. Соколов, Е. Михайлов, Д. Спрыжков, Н. тата А. Березинсем тата ыттисем те) Чăваш Енре тата ытти регионти археологи экспедицийĕсене хутшăнаççĕ.

Муркаш районне те археологсем тĕпчевсем ирттерме пĕрре мар килнĕ.

Нумаях пулмасть археологсем Ильинка вăтам шкулне ачасемпе тĕл пулма килсе кайрĕç. Наталья тата Александр Березинсем, Евгений Михайлов археологсем Ильинка, Мăн Сĕнтĕр, Катькас ял тăрăхĕсенчи археологи палăкĕсем пирки каласа пачĕç: Сартон, Малахай, Туçи Олкаш ялĕнчи палăк, ыттисем пирки те. Сăмах май, археологи палăкĕсен Малахай комплексне пĕрремĕш хут 1926 çултах тĕпченĕ. 1958, 1970, 1982 – 1984 çулсенче кунта тĕрлĕ экспедици тĕпчевсем туса ирттернĕ. Çак вырăнта тупнă япаласем Чăваш наци музейĕнче, истори музейĕнче, Мари Эл Республикин наци музейĕнче упранаççĕ.



Александр Березин ачасене чăваш халăхĕн авалхи историне кĕскен каласа пачĕ, хăй вăхăтĕнче çак халăх экватор территорийĕнче пулнине те пĕлтерчĕ. Археолог ачасене мамонт шăлне кăтартрĕ, çав чĕр чун мĕнле пурăннине, мĕнле вилнине каласа пачĕ, Чăваш Енри археологи тĕпчевĕсем вăхăтĕнче тупнă хăш-пĕр япалапа паллаштарчĕ.

Евгений Михайлов Малахай комплексне тĕпчени çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕ, Амакçар утравĕ пирки те сăмах хускатрĕ. Ăсчах историлле пĕлтерĕшлĕ вырăнсене, шел пулин те, археологсем кăна мар, авалхи япаласем тупса услам тăвас текенсем те куç хывнине пĕлтерчĕ. Çавăнпа та археологи палăкĕсем таврашĕнче çĕр чавакансене курсан ачасене вĕрентекенсене пĕлтерме ыйтрĕ.

Ачасемшĕн ку тĕл пулу питĕ кăсăклă пулчĕ, вĕсем археологсене чылай ыйту пачĕç. Хуравсене итленĕ май вара ачасен тĕлĕнмелли нумай пулнине вĕсен пит-куçĕ уççăн кăтартса пачĕ. Кун пек интереслĕ тĕл пулусем татах пуласса шанаççĕ вĕренекенсем.

**И. КАРГИН,**
**Ильинка шкулĕн вĕрентекенĕ.**

«Халăх пуçарулăхĕ»

# Халăхпа тĕллевлĕ ĕçлени – кашни урамра

**Ялсен пурнăçне çĕнĕ варкăш кĕртес ĕçре иртнĕ çулсенче унта пурăнакансен пуçарулăхĕ малти вырăна тухрĕ. Кунта уйрăмах ялсемпе иртме-çӳреме автоçулсемпе кĕперсем тăвасси тата вырăнти инфраструктурăна тивĕçлĕ шайра аталантарасси, çăлсем алтасси, ялсене ĕçмелли таса шывпа тивĕçтересси т. ыт. те тĕп вырăнта тăраççĕ.**

– Пĕрле пулса пĕр тĕллевпе ĕçлесен нумай ĕçе кĕске вăхăтрах татса пама пулать. Çакна ăнланнисем юлашки çулсенче тăрăшарах та тĕллевлĕрех ĕçлеме пуçларĕç. Хамăр тăрăхри ял çыннисем пурнăçпа тан пыни савăнтарать мана, ырă малашлăха шантарать, çĕнĕ ĕмĕтсем тĕвĕлентерет. Кулленхи ĕçе халĕ каланине тĕпе хурса пурнăçласа пыратпăр та. Ăна никĕслесех малашлăх плансене тăватпăр, – кăмăллăн кĕтсе илчĕ мана **Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Надежда Никитина.**





Ялсенче унчченхи пекех паян та çул-йĕр ыйтăвĕ тĕп вырăнта сыхланса юлнă. Ăна вăхăтра тата ялта пурăнакансем майлă татса парасси – ял тăрăхĕн ĕç никĕсĕ. Ăна пурнăçлассипе ял тăрăхĕн администрацийĕ кун йĕркинчи çĕнĕлĕхсене алла илсе, вăхăтра тĕрлĕ программăна кĕрсе тăрăшса пырать.

Çӳлерех каланине Кашмашри çамрăк çемьесем пурăнма уйрăлса тухнă çĕнĕ урамра (Яриков урамĕ) ача-пăча лапамĕ йĕркелени те çирĕплетет **(виççĕмĕш сăн ӳкерчĕкре).** Эсир куракан ача-пăча лапамне тума кунта пурăнакансем (пĕтĕмпе 297328 тенкĕ) пĕр пайне хăйсен кĕсйинчен пуçтарнă. Паян унта ача-пăча йышлă пулни ашшĕ-амăшĕшĕн те тулли савăнăç пулса тăрать. Çапла вара урамсем тирпейленсе пыни ку тăрăхри ялсене те çĕнĕ хăт кĕртсе пыни пирки калать. Унта кĕрсен каялла тухас та килмест.

Паянхи куна ял тăрăхĕнчи тĕрлĕ йышши çулсем пур. Вĕсем тăтăш юсав ĕçĕсем ыйтаççĕ. Ял тăрăхĕ пĕлтĕр Шупуçĕнчи Орлов урамĕнчи çула пуçарулăх бюджечĕпе усă курса кĕске вăхăтра 1411788 тенкĕлĕх юсама вăй-хал çитернĕ. Ятман ялĕнчи ку таранччен нумай калаçтарнă Нагорная урамра 650 метр тăршшĕ çула вак чул сарса хытарма кайнă 1313587 тенкĕре те ял халăхĕпе çывăх ĕçлени питĕ вырăнлă пулнă. Иртнĕ çул çак мелпех ял тăрăхĕн администрацийĕ Çатракассинчи Привольная урамра 700 метр çула юсама та мехел çитернĕ (1150970 тенкĕлĕх). Çак ялтах Заовражная урамри 200 метр çула вак чул сарса хытарма вара çул-йĕр ĕçĕ-хĕлĕн субсидийĕн шучĕпе ăнăçлă усă курни те вырăнти халăх пурнăçне лайăхлатниех пулать.

Ялта пурăнакансем валли яка çул-йĕр тăвасси тата пуррине юсаса тăрасси кăçал та Çатракасси ял администрацийĕшĕн тĕп вырăнта пулчĕ. Çавăнпа та пуçарулăх бюджечĕн ыйтăвĕ 2021 çулта та асăннă ял тăрăхĕнче иккĕмĕш вырăна юлмарĕ. Тăрăшсан ĕç пулать. Çапла вара пуçарулăх бюджечĕ пулăшнипе иртнĕ çу кунĕсенче Кашмашри Токарев урамĕнче – 651 метр (1144066 тенкĕ – вăл шутран халăх укçи 114406 тенкĕпе танлашать), Очăкассинчи Восточная урамра – 150 метр (384557 тенкĕ – вăл шутран халăх укçи 37878 тенкĕпе танлашать), Çĕньял Очăкассинчи Учительская урамра 220 метр çул сарса хăварнă.

Кашмашра çĕнĕ шкул тунă май халăхран пуçтарнă тата районти çул-йĕр фондĕнчен уйăракан 477210 тенкĕпе Молодежная урамра 180 метр çул юсани те – яла хăт кĕртекен утăм шутĕнчех.

«Ял тăрăхне хăт кĕртесси» программăпа килĕшӳллĕн Кашмашри Советская урамран çĕнĕрен çĕкленекен пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул патне тротуар тума палăртнăччĕ. Ял çыннисем çак ырă пуçаруран та айккинче тăрса юлмарĕç. Кĕске вăхăтрах ăна та пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе усă курса сарса тухма пултарчĕç. 240 метр тăршшĕ, 2 метр сарлакăш (хакĕ 3 миллион та 45 пин те 470 тенкĕ) тротуар паян ачасене кĕтет **(пĕрремĕш тата иккĕмĕш сăн ӳкерчĕксенче).**

Ял тăрăхĕнче пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе çулсем тума çеç усă курмаççĕ. Ял тăрăхĕн балансĕ çинче тăракан шыв усăлакан 6 башньăна проектсем хатĕрлесе капиталлă юсав ĕçĕсем тума конкурса тăратни те – вырăнта ĕçсене тĕрлĕ енлĕ туса пынине çирĕплетекен тĕслĕх.



**Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**

Спорт

# «Муркаш» ăсталăхĕ ӳссех пырать

Муркаш шкулне хирĕç вырнаçнă стадионта час-часах футболла выляканcене курма пулать: шкул ачисем кăна мар, арçынсем те выляççĕ.

Муркаш районĕнчи арçынсен «Муркаш» футбол команди тăватăпилĕк çул каялла кăна-ха пĕрле пухăнса тренировкăсем иртterме тата республикăн футбол чемпионатне пуçламăш шайра хутшăнма тытăнчĕ. Нумай вăхăт иртмен пулин те, пĕр паллă кал арăшри пек, чăтăмлăх тата çанă тавăрса ĕçлени вĕсене çитĕнӳ тума пулăшрех: кăçал «Муркаш» Чăваш Ен чемпионатĕнче пĕрремĕш дивизионта вылярĕ. Кăçалхи вăйăсем май уйăхĕн çурринчен пуçланнă та сентябрь çурриччене тăсăлнă. Пурĕ 18 вăйă иртternĕ муркашсем, вĕсенчен 9 вăйăра çĕнтернĕ, 3 вăйăра пĕр тан результатпа вĕçленĕ, 6-шĕнче выляса янă.



– Эпир, муркашсем, çак чемпионатра илемлĕ футбол тата харсăрлăх, çĕнтерӳ патне ăнтăлнине кăтартма пултартăмăр. Чемпионат пĕтĕмлетĕвĕпе тăваттăмĕш вырăн йышăннине те хальхи лару-тăрура çитĕнӳ тесе хаклатпăр. Ку сезона питĕ хăватлăн иртtertĕмĕр. Пирĕн командăри хӳтĕлекене – Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Евгений Петрова – уйрăммăн палăртса хăварас кăмăл пур. Вăл пĕр вăйă та сиктермерĕ, командăра вылякансен шухăшĕпе сезонти чи лайăх вылякан пулчĕ, – палăртать команда представителĕ Максим Максимов.

Паллах, пулăшусăр футбол та аталанма пултараймасть, вăйăсене тухса çӳреме те укçа-тенкĕ кирлĕ. Футболистсем команда спонсорĕсене – «Метпласт» компани ертӳçине Алексей Николаев тата «Нокта» автозаправка директорне Дмитрий Романов предпринимательсене, Муркаш район администрацине тав сăмахĕ калаççĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**